С(Чув)
К А95
31852чув

Валем Ахун

# Шевле вăйи



Чăваш
кĕнеке
издательстви

Национальная библиотека ЧР
4-031852

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Валем Ахун

# Шевле вăййи

*Сăвăсем*



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви 1989

ББК 84 Чув 7-5
А 95

ПРОВЕРЕНО
20 10

31852-чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Ахун Валем.**

А 95 Шевле вăййи. Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 1989. 48 с.

Кĕнекене шкул çулне çитмен ачасем валли çырнă сăвăсене кĕртнĕ. Вĕсем пĕчĕк вулакансене çутçанталăка сăнама, чĕрчунсене, Тăван çĕршыва юратма вĕрентеççĕ.

**ББК 84 Чув 7-5**

А $\frac{4803010200-121}{М\ 136(03)-89}$ 81—89

ISBN 5-7670-0190-1

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Çуралнă кил, умри йăмра.
Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Хитре янран кĕсле-тăмра.

Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Кил-çурт паран чунри хĕлхем.
Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Хурçа татан тăван чĕлхе.

Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Пĕрре анчах, пĕлер хакне.
Тăван çĕршыв вăл пирĕн —
Асран кайми атте-анне.



* * *

Сӑрт тӑрринчи ҫилармань
Вӑшӑл-вашӑл ҫунатлӑ,
Ҫуначӗсем тӗрӗллӗ,
Тӳпеттейӗ чӗнтӗрлӗ,
Аркийӗсем хӑюллӑ,
Пуставӗсем кӑшӑллӑ,
Ырҫийӗсем ҫӑнӑхлӑ,
Алӑкӗсем сӑлӑплӑ,
Пусмийӗсем шур чуллӑ,
Хӳри вӗҫӗ — тевӗшлӗ.

## УЙӐХ

Ҫурлаланчӗ, ҫӑмхаланчӗ,
Ларма хӗр пек вӑл юсанчӗ,
Вӑхӑт ҫитрӗ те — ҫухалчӗ.
Ҫӗннине эп халь кӗтетӗп,
Тухатех ыран, пӗлетӗп.
Тӑхри ҫиҫӗ такан евӗр,
Кӗҫех — ҫур кулачӑ тейӗр.
Каллех, акӑ, чӑмӑртанӗ,
Кӑлтӑрин кустарӗ, анӗ.



* * *

Вăшик! вăшик! çил вĕрет,
Хирти куян тĕршĕнет.
Чавка пуç пек юр çăвать,
Хутлам-хутлам кĕрт хывать.
Хура вăрман хумханмасть,
Çил çук унта, вылямасть.
Ларать вăрман тĕлĕрсе,
Пасне хуллен тĕтĕрсе.
Ларать шап-шур сăхманпа,
Çемçе, кăтра калпакпа.
Пин-пин çулхи ăсчах пек
Юмах ярать ерипен.

## ÇУРАН ТĂМАН
### (Хĕллехи ӳкерчĕк)

Хирте шур юс чупать,
Выля-выля кусать.
Пăхать кашни тĕме,
Май çук-ши тет кĕме.

Çырма тĕлне пулсан,
Қата тавраш курсан,
Шур юс унта чăмать,
Тинех тăнса* выртать.

Çулпа çуна иртет,
Лавçи юрра сĕтет.
Çӳлте ула курак:
— Ытла,— тет,— хĕл вăр-рах!..



* Тăнса — лăпланса.



## ИРХИНЕ

Сар хӗвелӗн ылтӑн урисем
Вӑрӑмланчӗҫ шуҫӑм сӳннӗҫем.
Акӑ вӑл хӑпарчӗ те ҫӳле—
Ларчӗ шурӑ пӗлӗтсем ҫине.
Йӑлтӑр-ялтӑр пӑхрӗ савӑнса,
Тӗнчене вӑл ячӗ ӑшӑтса.

* * *

Ҫӑрлач сиввийӗ тамалсан,
Хӗвел хаваслӑн таврӑнсан—
Упа та хӑйӗн йӑвинче
Хӑяккӑн выртрӗ ҫаврӑнса.

...Хӗвел хӗрӳллӗ кунсерен,
Юрлать шур юр пусмассерен.
Йӑшланнӑ сӑртӑн тӳпинче
Тилли ялтлатрӗ ирсерен.

Сив хӗл иртет, ҫӗтет—
Хура курак кӗҫех ҫитет!
Тумлам курсан, сӑхман хывса,
Сарай ҫинче ҫерҫи сикет.



## ШЕВЛЕ ВӐЙИЙИ

Вылярӗ те пытанчӗ,
Инçе-инçе çухалчӗ.
Унтан татах çуталчӗ,
Ҫаллех сӳнсе лӑпланчӗ.
...Эпир сӑртра ларатпӑр,
Шевле вӑййи сӑнатпӑр.
Ҫиçсе ярсан асамлӑн,
Уйсем çине сӑваплӑ
Шерпет сапма ыйтатпӑр.



## ÇУМӐР

Çумӑр çу! Çумӑр çу!
Уя-хире тулӑх ту!
Пылпа çӑкӑр çитерӗп,
Тутлӑ шерпет ӗçтерӗп.
Тырпул ӳстӗр хӑмӑш пек,
Пучахӗсем йӗтӗр пек.
Пӗрчи пултӑр йӗкӗрлӗ,
Тути пултӑр техӗмлӗ.



## ХĂМЛА

Ши-и эп кайрăм,
Пи-и эп кайрăм,
Шăчă тăрăх авкалантăм,
Çулçăн-çулçăн саркалантăм,
Сар курланкăн чăмăртантăм.
Пур манра инçе аваллăх —
Халăх чунĕнчи хаваллăх.
Эс пĕлсем — хăмла ман ятăм,
Çич эмеллĕх пур хăватăм.
Эп кашни килтех ӳсетĕп,
Ял тĕсне илем кӳретĕп.

## ЮМАН

Йĕкĕр-йĕкĕр йĕкĕрпи,
Вăхăт çитĕ — шăкăрпи.
Нӳрĕ пулĕ — тымарпи,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçăпи.
Ҫайăп тӳррĕн ăнтăлса,
Ларăп ирĕк сарăлса.
Эп ӳсетĕп виççĕр çул,
Эп чăтатăп çичçĕр çул.
Ятăм сумлă халăхра,
Ҫирлĕ-мĕн хуçалăхра.
Ман кашни турат шутра:
Çирĕп никĕс кил-çуртра,
Шĕвĕр çуркăн — тĕкмере,
Ҫасмăк-сасмăк — нӳхрепре.



## АҪ ТЫТАТĂП ТА ВĔҪЕТĔП...

— Ҫăтăл-ҫатăл! Ҫăтăл-ҫатăл!
Мĕн мана вăл ҫавă Атăл?!
Ак тытатăп та каятăп,
Урлă ваш! кăна каҫатăп.
Леш енче вăрманĕ аслă,
Ҫайăксем те пит хаваслă.
Туй тăвать ирех чакакĕ,
Ян! каять тавран такмакĕ! —
Тет иккен, вĕрсессĕн ҫилĕ,
Симĕс ăвăсăн ҫулҫийĕ.
Ҫил иртсен — каллех вăл вилĕ,
Лĕнчĕр кайнă пĕвĕ-сийĕ.
Ҫил килсен татах: — Ҫăт-ҫатăл!
Мĕн мана вăл ҫавă Атăл?!
Ак тытатăп та вĕҫетĕп,
Ҫут тĕнче хĕрне ҫитетĕп.
Ҫăтăл-ҫатăл! Ҫăтăл-ҫатăл!
Мĕн мана вăл ҫавă Атăл?!
Тинĕс мар, ҫырма ҫеҫ Атăл!..



* * *

Вăштăр-вăштăр уçă çил,
Сулхăнваркăш илсе кил!
Утă çулакансене,
Улăхри кĕтӳçсене
Кăштах уçăлтарса ил.

Вăштăр-вăштăр ырă çил,
Сулхăн варкăш илсе кил!
Тырă выракансене,
Суха тăвакансене
Кăштах ачашласа ил.



## ПĔРХĔТ КАЙĂК

Пĕрхĕт кайăк пĕлĕт айĕнче,
Куçĕ ун Сăр шывĕ çийĕнче,
Пур йăви — юманлăх тăрринче,
Виç чĕппи — шур мамăк ăшĕнче.

Харсăр кайăк вĕççĕр кăрлатать,
Ик çуначĕ вичкĕн вашлатать.
Халь ăна кĕтеççĕ чĕпписем,
Сар сăмсаллă пĕчĕк пепкисем.

Çавăнпа-çке пĕрхĕт пит васкать,
Чунĕпе халь кашнинех лăпкать.
Сас парать вăл пĕлĕт патĕнчен,
Куç илмесĕр хăй йăви çинчен.

* * *

Ҫӗр тӗрриллӗ шуҫӑм,
Савӑнать ялйышӑм.
Тулӑх ҫитӗннӗ тырри,
Ян каять уй-хир юрри:

— Эп ыраш пулатӑп,
Тинӗс пек кашлатӑп.
Тутлӑ ҫӑкӑр ҫитереп,
Ҫын чунне хевте кӳреп.

— Эпӗ — шурӑ сӗлӗ,
Ан силлетӗр ҫилӗ...
Тинкӗле пулать манран —
Хатӗрле шерпет, уйран.

— Пӗрчӗм — виҫ кӗтеслӗ,
Пӑттӑм пит сӗтеклӗ.
Эпӗ сумлӑ хуратул —
Сар сӗтел илемӗ тул!

— Эп — урпа, хӑватлӑ,
Вӑйӑм ман ҫунатлӑ.
Сӑйлӑх пулӑп та пиҫсе —
Ҫуслӑн ларӑп йӑл ҫиҫсе.

— Эпӗ — лапчӑк ясмӑк,
Пӗр ытам — пӗр касмӑк,
Эс пӗҫер манран шӳрпе
Ҫӗрӗ* сурӑх ашӗпе.

— Ҫас пики — вырсассӑн,
Туй каччи — лартсассӑн,—





---

* Ҫӗрӗ — мӑнтӑр.

Теççĕ ман пирки пурте,
Ятăм вир — ӳсеп хирте.

— Эпĕ — сарă тулă,
Пуçăм, теççĕ, çуллă.
Выр та авăрт, çăнăх ту,
Пулăп шурă хăпарту.

— Эп — пăрçа, шăрçаллă,
Ҫимĕ пек ырçаллă.
Тутă манăн та яшка,
Ҫийĕн — пулмăн хăйпашка.



**ҪĔРКУННЕ**

— Ҫи-как! Ҫи-как! кайăксем,
Ăçта эсир васкатăр?!
Илем кӳрен шур хурсем,
Мĕн-ма кунтан каятăр?!

Ҫи-как! Ҫи-как! кăшкăрса,
Шывран шыва вĕçетĕр.
Ҫунатăра сулласа:
— Ҫилес çулччен! — теетĕр.

Текех инçе уй-хирте
Ҫынсен сасси янрамасть.
Ҫилсем епле вĕрсен те,
Ыраш пусси хумханмасть.

Ҫĕтес пулать хурсене
Тепре çăва тухиччен,
Сăртсемпеле хирсене
Ешернине куриччен.





## ТĂРНАСЕМ

Кăн-кăвак çурхи тӳпе
Хĕл сиввийĕ иртӳпе.
Ав, килет тăрна карти.
Çул тытать хастар — малти.
Ял çипе иртет майпен:
— Ырлăх-сывлăх,— тет,— пиртен!
Çитмĕл çич çунат çинче
Халь килетпĕр çу илсе.
— Çилсĕр çул! — теп, ыр сунса,
Ыткăнатăп ал сулса.
— Ваш çунатлă тăрнасем,
Çӳл туналлă кайăксем!
Анăр пирĕн ял çумне,
Çутă Хырлăх хĕррине.
Çутă Хырлăх çумĕнче,
Аслă улăх варринче,
Виç йăмраллă пĕр çăл пур,
Иплĕ-сиплĕ шывĕ пур.
Пăхрăн — тĕпĕ курăнать,
Ĕçрĕн — пылăн туйăнать.





**ХУРЧĂКА**

Çӳлте вĕçет хурчăка,
Çӳлте вĕçет хурчăка,
Анкартине анасшăн,
Сарă чĕппе тытасшăн.
Ак вăл курчĕ те чĕппе —
Чăмрĕ çĕр çине чул пек.
Юрать-ха ула Кампур,
Пĕчĕк анчăк, пирĕн пур.
Сикрĕ тухрĕ йăвинчен:
— Кам?! Хам! — терĕ ик хутчен.
Çил пек тарчĕ хурчăка,
Кĕç лекетчĕ анчăка.

**ШУРКУТ**

Çаран çинче шуркут чăрлать,
Çунатне вăл çилпе хăйрать.
— Шуркут, шуркут, ăçта васкан?
Çыран хĕрне кăшт ларса кан!

— Ларса канма ман вăхăт çук
Кунсем хĕвеллĕ тăнă чух.
Мана кĕтеççĕ йăвара,
Лаштра йăмраллă çырмара.

Ачам-пăчам шуйланчĕ пуль,
Пăха-пăха кулянчĕ пуль...

## ТӐМАНА

Ыйха пӗлмен тӑмана
Ҫӑвак ирччен ухлатать.
Ҫаҫхи хура вӑрмана
Вӗҫрен вӗҫе хускатать.
Чӗтреҫҫӗ унӑн сассипе
Ҫӑлик-ҫӑлик ӑсансем...
Шарт! чиртеҫҫӗ пушшипе
Утсем кӗтен ачасем.
Юмах пекех ҫут тӗнче!..
Лапран тӗтре ҫӗкленет.
Хура сӑртсен тӑрринче
Хушка ҫӑлтӑр ҫиҫкӗнет.





## ЧЕПЧЕН

Атӑл тӑрӑх шур хӑва,
Ҫавӑрать чепчен йӑва.
Ҫавӑрать те савӑнать —
Ҫурчӗ ҫийӗн явӑнать.
Вӑл ларать кӗҫех пусма,
Чӗвӗл-чӗвӗл йыш тума.

## АЛ ÇУПТАРĔ ВАТĂ ВĂРМАНА...

Анăçран хура ĕне килет,
Куçĕ-пуçĕ йăл! та ял! çиçет.
Хăй мăнаçлăн, хыттăн мĕкĕрет,
Çулăкне силлет те — çил вĕрет.
Мăн ырçи, капан пекех, тулли,
Çурăлса каяс пекех çилли.
Ак кĕçех вăл çитĕ те кунта
Шапăрах лӳшкетĕ çӳл сăрта,
Ал çуптарĕ ватă вăрмана,
Савăнтарĕ кивĕ армана.
Сиплĕх кӳрĕ сĕчĕ ун пире,
Ешĕл тум урттарĕ уй-хире.
Тулăх пулĕ пыллăх та çаран,
Тыра кашлĕ ут пĕкки таран.

Анăçран хура ĕне килет,
Мĕкĕрет те — хăй мулне силлет.



## ПУТЕНЕ

— Пĕт-пĕлтик! Пăть! Пĕт-пĕлтик!
Çумлă сан урпу, Талпик!
Тух часрах çум çумлама,
Вăхăт мар халь ташлама!..
Шав юрлать хăй ĕмĕрне
Çут теветлĕ путене.
Пурăнать вăл уй-хирте,
Ун йăви улах çĕрте.
Шуçăмпах вăл, ирхине,
Ян! ярать çак кĕввине:
— Пĕт-пĕлтик! Пăть! Пĕт-пĕлтик!
Çумлă сан урпу, Талпик!
Тух часрах çум çумлама,
Вăхăт мар халь ташлама!..

## ШУРĂ АКĂШ

Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать,
Шывĕ юхать шурă-шурă чул çинчен.
Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять,
Хумĕ вылять ешĕл çыран хĕррипе.
Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç,
Вĕçрĕç килчĕç шурă акăш чĕпписем...
Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç,
Вăй вылярĕç çутă-çутă хум çинче.
...Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç,
Вĕçрĕç кайрĕç шурă акăш чĕпписем.
Шывĕ юлчĕ,
Шывĕ юлчĕ,
Шывĕ юлчĕ хуралса та хурланса.
Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ,
Хăмăш юлчĕ хумханса та юрласа.



31852-чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

## СĂВĂР...

Йышпа-йышпа пурăнать,
Шĕвик! шĕвик! шăхăрать,
Çич уйăх вăл çывăрать,
Юр ирĕлсен — вăранать.
Çырма-çатра хĕррине,
Пĕр-пĕр тӳпем тăррине,
Чавса тăвать йăвине —
Сăвăр теççĕ кайăкне.

## ЧĔРĔП

Сысна мар вăл — укçаллă,
Хурт пек кĕске туналлă.
Чуппийĕ йăпăр-йăпăр,
Уттийĕ кăпăр-кăпăр.
Инкек çитсен — çăмхаллă,
Ахаль чухне — ураллă.
Çĕлен унран пытанĕ,
Чикенлĕ ун сăхманĕ.
Тукмак ăна тытаймĕ,
Тилли те кап хыпаймĕ.



# ЁЛККЕН ТУКМАК, ЭС — ЙЁС ТУКМАК...
## (Чее тилле витлени)

Сап-сар тукмак, эс — йёс тукмак*,
Ҫарта хыҫне хывсам сукмак.
Ҫёле курса — тута ҫулла,
Ҫӑтик юрри ларса юрла.

Япшар тукмак, эс — йёс тукмак,
Вёшле тёлне пулсам, супьях.
Хӳрӳ вёҫне ҫыртса вёҫтер,
Сике-сике йёрне ҫётер.

Ёлккен тукмак, эс — йёс тукмак,
Тивет пуль ҫав шӑши тытмах.
Сана Ҫуҫук шутлать вӑлтма,
Хӑйне валли калпак тума.

Чее тукмак, эс — йёс тукмак,
Ӑҫта хыватӑн халь сукмак?
Чупан хирте яра куна —
Шеллеп сана, айван чуна.

---
* Йёс тукмак (халӑх сӑмахё) — тилё.





## ÇĂРТТАН

Пит усал ула çăрттан,
Чăн-чăнах шыври шуйттан.
Тек çӳрет вăл çăтăхса,
Урлă-пирлĕ ухтарса.
Айăн-çийĕн вăл кумать,
Вĕт пулла хыпать çăтать.
Ах, мĕнле вăл пилсĕрскер,
Çивчĕ çекĕл лекменскер.
Пурпĕр тытăп эп ăна,
Выçă куçлă çăрттана!
Вĕлт чăмтарăп вăлтине —
Лекĕ, пăрăп хăлхине.

## ШАПА

— Ак! ак! ак!
Ак! ак! ак! —
Тет шапа шыв хĕрринче,
Ватă çирĕк айĕнче.
Вăл чĕнет пулăсене —
Кĕмĕл пек çупахсене.
— Тупрăм, — тет, — хитре мерчен
Çакă кӳлĕ тĕпĕнчен! —
Хăйĕн вара ним те çук,
Выляс килет ăшă чух.
Ав, çанталăк ăшăтать,
Çавăнпа вăл кăшкăрать.



* * * 

— Чăш! — тет, — кăш! — тет
мана шур хур, —
Пусма ларас терменĕм* пур.
Кĕç акă чĕпĕ кăларап,
Асту, сăхма та пултарап...
Эс ан çӳре йăвам тавра,
Сăхман ача ман пит сайра.
Ан ашкăн эсĕ ман умра,
Выля та сик, ав, урамра.
Шавпа шар курĕç чĕппĕмсем,
Тухаймĕç пĕчĕк шимписем.

— Чипер пусма ларан хура
Эс ан шуйхат, вăйăйа кура.
Шăпрах, ачам, ан кĕмсĕртет, —
Тесе аннем те вĕрентет.
Хур патĕнчен вăр-вар каяп,
Ай, хыт сăхать вăл, эп туяп.
Тухатăп эпĕ урама.
Унта пит ирĕк выляма.

---

* Термен — вăй-хал, кăмăл.



## ХУÇАМ МАНА УТЬ ТЕРĔ...

— Теветлĕ кăвакалăм,
Ӳрчеклĕ кăвакалăм,
Ăçта каплах васкатăн,
Хашка-хашка чупатăн?
— Хуçам килне васкатăп,
Апат çиме каятăп.
Хуçам мана уть терĕ,
Ĕçме-çиме чуп терĕ.
Çиесчĕ-ха, çиесчĕ,
Пĕсехеме чыхасчĕ.
Хуçан тулли ан пĕттĕр,
Хапха юпи ан çĕртĕр.
Хӳрем шывра вылятăр,
Сăмсам — сар тул таккатăр.



## ПИРĔН КАЧАКА

Йĕтĕн пек çемçе сухалĕ,
Шăкăрт-шăкăрт çут пушмак.
Тăлăп пек ула чаппанĕ,
Икĕ шĕвĕрлĕ калпак.
Кур, сарай çине хăпарнă,
Ту кушакĕ пек вăр-вар.
Купăста пуçне тустарнă,
Пахчана кĕрсе, чăл-пар...
Ак мĕнле вăл пултаруллă
Пирĕн йăрă качака.
Ялт! çеç сикрĕ вĕрлĕк урлă,
Эп ятлатăп пуçтаха.



* * *

Çавра хушкаллă паниçкем*,
Ука мăяллă хитрешкем,
Ырçу тулать-им çавrăнса,
Çиллӳ каять-им карăнса?
Ырçу тулсан, сĕтӳ пулсан —
Киле кайма та вăхăт сан.
Атя киле халь, паниçкем,
Хушка çамкаллă чиперккем.
Анне сана кĕтет сума,
Лартасчĕ турăх, тет, тума.
Ула кушакăм вайăклать:
— Парсамăр сĕт,— тет, чупкалать.

## ТУРĂ УТĂМ — ЧУН ÇУТИ...

Уртăш йывăç — ут юпи,
Турă утăм — чун çути.
Уртăш йывăç тăрринче
Сарă пуçлă кайăк пур,
Аслă улăх варринче
Тăпăрт! тăпăрт! утăм пур.
Тӳрĕ унăн урисем,
Çутă кĕмĕл чĕрнисем.
Чĕнтĕм лăпкăн йыхăрса,
Шыв ĕçтертĕм шăхăрса.
Утăм ячĕ кĕçенсе,
Кайрĕ хыттăн вирхĕнсе.
Уртăш йывăç — ут юпи,
Турă утăм — чун çути.



* Паниç (халăх сăмахĕ) — ĕнене ачашласа йыхăрни.

## ҪĂРИК-ҪĂРИК ҪĂРККА ТУС...

Ҫуккук пекех чăп-чăпар,
Ăна ялан урпа пар...
Ав, килет вăл каçрăлса,
Сăхман арки тавăрса.
Атти кĕске, çӳпçе пек,
Туни çинçе, хурса пек.
Ҫăрик! тесен хĕрелет,
Тевечĕпе силленет.
Ҫуртей пичче, пул вăр-вар,
Татах урпа сапса пар.
Ҫăркка валли ырлăху —
Тулли пулсан пăчăху *.
Ҫăрик-çăрик çăркка тус,
Пĕрре сик те тепре пус.
Сăхман арки çавăрса,
Парсам пире ташласа!



## ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ ЧĔПĔСЕМ

Чĕп кăларчĕ ула хур,
Вуник шимпи халь ун пур.
Вуннăшĕ, ав, сап-сарах,
Иккĕшĕ çеç сăрăрах.
Шимплетеç çерем çинче,
Ирхи хĕвел питĕнче.
Тĕлĕнет ама-кикак,
Хăяккăн пăха-пăха:
— Ҫама хыврĕç-ши кусем,
Ҫак иккĕшĕ — сăррисем?..
— Ҫама пулччăр? Хамăра...
Ху та вĕт кăштах хура, —
Тет аçи, ташла-ташла,
Ҫунатне сулла-сулла.



* Пăчăх — тырă, çăнăх е кĕрпе тытмалли йывăç катка.

## ЭП УН ЧУХНЕ АЧАЧЧĔ...
### (Шӳтлĕ сăвă)

Шăтман хăва ларатчĕ,
Ӳсмен куян хыратчĕ.
Шăтман çĕртен шăтартăм,
Пулман çĕртен пултартăм.
Юмах ярса юптартăм,
Тавра яла култартăм.
...Эп ун чухне ачаччĕ,
Аттем манпа танахчĕ.
Ҫукаç сăпка сикетчĕ,
Анне вăййа çӳретчĕ.
Ҫуй-куяна хăратрăм,
Вĕшлемпелен çаклатрăм.
Ик кун ашне пĕçертĕм,
Вуник яла çитертĕм.
Вунçич калпак çĕлетрĕм,
Ҫиле-йыша тĕсетрĕм.
...Эп ун чухне ачаччĕ,
Атте шакла пăчаччĕ.
Ҫукаç сăпка сикетчĕ,
Анне катан тĕртетчĕ.
Шăтман хăва ларттартăм,
Пулман çĕртен пултартăм.
Суя çулпа чуптартăм,
Чеен кулса юптартăм.





* * *

Тух, тух, Хĕвел!
Тух, Хĕвел!
Ул ачу кайнă Атăла,
Хĕрачу кайнă Ҫавала.
Ылтăн кармакупа туртса ил,
Қĕмĕл таканупа ăсса ил.
Тух, тух, Хĕвел!
Тух, Хĕвел!
Ҫу парăпăр — ҫу тирĕкпе,
Пыл парăпăр — сар чĕреспе.
Ҫу пекех ҫемҫелтĕр кăмăлу,
Пыл пекех ҫуталтăр чĕрейӳ.
Тух, тух, Хĕвел!
Тух, Хĕвел!
Йăлттам та ҫивчĕ утсене
Қӳлсе тăратнă кӳмӳне.
Хăйсем пурте йăл-йăл саррисем,
Вĕлкĕшеҫҫĕ ҫилпе ҫилхисем.

## ЭСИР ҚУРМАН ҚУН ПЕҚ ҚАМИТ...

Вăтакасра ирех шăв-шав:
Қăтик! кăтик! Хăв-хав! — Йăслав.
Тимуш чăххи мунча хутать,
Чăпар автан шывне йăтать.
Қăркка вутне касать, ваклать,
Йытти ҫĕн милĕк, кур, майлать.
Қушак аҫи те ухăнса
Ĕҫлет, ав, ҫанă тавăрсах.
Шăла-шăла сар мăйăхне
Сĕрет мунчалăх сĕлтине.

Сире, атьсем, паян евит:
Эсир курман кун пек камит.
Ҫурмашкӑн кулӑш-тамаша,
Хисеп тумашкӑн ҫак йыша
Сире чӗнеп Вӑтакасса,
Ан юлӑрах ыйха тӑсса.

## АЙ, ХИТРЕ ТЕЛЛЕ «ЛАШИ»...

### (Пӗчӗк юмах)

Ҫачакине утланса,
Мӑк сухалне каҫӑртса,
Телле кайрӗ Туйсара,
Ҫич ҫухрӑмри пасара.
Тӗлӗнеҫҫӗ йытӑсем,
Ахӑраҫҫӗ ачасем,
Шак хытаҫҫӗ туйсарсем,
Пӗҫ ҫапаҫҫӗ ҫӗрпӳсем:
— Ай, хитре Телле «лаши»,
Ҫитеймест кӑштах маси!..
Витсен чаплӑ кавирпе,
Ҫивӗтлесен ӗнчӗпе,
Ҫӗнӗ йӗнер туянсан,
Йӗвенне укаласан,
Селӗм пулӗччӗ питех!
Пулӑн ху та хун * пекех!
...Ҫачакине утланса,
Мӑк сухалне каҫӑртса,
Телле кайрӗ Туйсара,
Ҫич ҫухрӑмри пасара.



* Хун — патша.

## ПИЛЁК ПЁРТАВАН

Пĕр алăри пӳрнесем
(Ай, камитле тамаша!)
Пухăнчĕç, тет, канаша.

Пуç пӳрнийĕ калать, тет:
— Эх, хурасчĕ-çке кăвас,
Эп кулач çиме хавас...

Шĕвĕр пӳрни калать, тет:
— Çăнăх чĕптĕм те çук-çке,
Пăчăх тĕпĕ шăтăк-çке...

Чи вăтари калать, тет:
— Кӳршĕн пур янтти... Каяс,
Кăшт кивçен ыйтса пăхас.

Ятсăр пӳрни калать, тет:
— Вĕçсĕр кивçен ыйтасси...
Йывăр ӳлĕм парасси...

Хай качийĕ калать, тет:
— Кирлĕ мар пире янтти,
Çук янттин пачах тути!
Çур çитсессĕн — тул акас,
Кĕр пулсан — пухас, çапас,
Шур арманта авăртас,
Ик чĕрес кăвас хурас,
Пĕлĕм-сĕлĕм пĕçерес,
Шур кулачне сиктерес.

— Ай, чăнах, ай, чăнах,
Çав Качи пиртен ăслах! —
Терĕç харăс пӳрнесем,
Пĕр алăри тăвансем.



— Атьӑр, шӑкӑл кар тӑрас,
Виҫ ана сар тул акас.
Сар кулачӑ ун чухне
Ҫӳрӗ сӗтел илемне.

## ТИМӖРҪӖ

— Чанк! Чанк! тимӗрҫӗ!
— Мӗн кирлӗ?
— Ҫӗмӗл ҫӗрӗ.
— Мӗн тума?
— Ҫӗрӗлле вӑй выляма.
— Чанк! Чанк! тимӗрҫӗ!
— Мӗн кирлӗ?
— Ҫӗмӗл сулӑ.
— Мӗн тума?
— Алӑ сулса ташлама.
— Чанк! Чанк! тимӗрҫӗ!
— Мӗн кирлӗ?
— Акапуҫ тӗренӗ.
— Мӗн тума?
— Уй-хирте суха тума.
— Чанк! Чанк! тимӗрҫӗ!
— Мӗн кирлӗ?
— Ӑста пуртти.
— Мӗн тума?
— Шурӑ-шурӑ пӳрт тума.



# ҪУН ПЕК УЯВ ĂҪТА ПУР-ШИ?



Хĕрхи, хĕрхи — хĕрне парать,
Вăрманкасси туйне тăвать.
Мерчен теветлĕ пăрчăкан
Ятне ҫĕлетнĕ ҫĕн сăхман.

Тăрик! тăрик! сике-сике
Туйра ҫӳрет тăрна пике.
Чăпар ҫунатлă путене
Кӳрет ҫак туйăн илемне.

Туй-ҫуй сикет вăрман тулли:
Юхать шыв пек хитре тилли.
Юрла-юрла, капмар упа
Чысне курать пылпа-ҫупа.

Юлман туйран мăнттай тукмак,
Ула-ула сĕтет такмак.
Хаваслăн ҫиҫкĕнет пăши:
— Ҫун пек уяв ăҫта пур-ши?..

Ташша ҫапаҫҫĕ куянсем,
Ҫатаҫҫĕ мăйăр пакшасем.
Епле йăлт-ялт хура сăсар!
Никам кунта салхуллă мар.

Чакак, ларса кӳме тăрне,
Тапсах калать, ав, купăсне.
Ула куракĕ — улантай,
Сăрнай вылятрĕ нăй та най!

Ҫăвак хĕрхин мĕскерĕ пур?
Ҫурас тесессĕн — пыр та кур!
Ҫупа пĕҫернĕ икерчи,
Ҫавран кустарнă йăвачи.



Тултармăш илĕртет, шăрттан,
Хуплу та техĕмлĕ çăрттан.
Тирки-тирки çырли, хăйми —
Сĕтел тулли ĕçми-çими.

Хысмаллă сарă чăкăтне,
Хăймаллă тутлă кăмăсне
Тытсан — çиес те килĕнет,
Ĕçсен — чĕлхӳ те ирĕлет...

Хĕрхи, хĕрхи — хĕрне парать,
Вăрманкасси туйне тăвать!

## ҪАМ ҪАМА УЛТАЛĔ-ШИ?..
**(Вăйă сăвви)**

Эсĕ — сурăх,
Эс — тукмак.
Ял енне каять сукмак —
Сурăх хыççăн сик, супьях!
Эс — пăшийĕ,
Эс — упа.
Тутă мар упа пылпа.
Юрт, пăши, ак çак çулпа!..
Эсĕ — тилĕ,
Эс — автан,
Урлă эсĕр авалтан.
Çуллă пуç, чан çап: тан! тан!
Эсĕ — йытă,
Эс — куян.
Халь, мулкач, епле суян?
Пул вăр-вар, хӳре туян!..
Эс — кушакĕ,
Эс — шăши,





Ҫам кама ултале-ши?
Чăм часрах пӳртне, чи-чи!
Эс — çӳлевĕç,
Эс — ăсан,
Вĕç пăр-пар! Ҫунтан ăсан.
Ав, çӳлевĕç! Мĕн пăхан?!
...Вăй вылятпăр
Ушкăнпа,
Савăнатпăр тус-йышпа,
Ҫитĕнетпĕр сывлăхпа.

## ТУХ, ЧУП, САР АЧА
### (Вăйă такмакĕсем)

Ҫайрăм хăнана —
Чаплă Пăвана.
Ҫирĕм эп куймак,
Ҫĕнĕ пыл, хăйма.
Тух, чуп, сар ача,
Парăп йăвача!
Ҫайрăм Сĕнтĕре —
Турĕç чыс сĕре.
Ĕçрĕм эп шерпет,
Пулчĕ пит эйпет.
Сарă хĕр, тух, чуп,
Вырăнна эс туп!
Ҫайрăм Ҫанаша,
Ҫуртăм тамаша:
Тураă ут юрлать,
Шур пăру ташлать,
Ҫаçăр качаки
Параппан шаккать.

Кайрăм Хусана —
Шурă хулана.
Çирĕм эп унаç,
Иçĕмлĕ кулач.
Эй, халь кам чупать,
Кам вăййа тухать?..

## КАРСАК КУЯН КУРТĂМĂР...

Карсак куян куртăмăр,
Кĕтмен çĕртен пуйрăмăр.
Хӳри юрать мелкелĕх,
Вучах питне сĕрмелĕх.
Тяппи — хырчăк тумалăх,
Мăрье ăшне хырмалăх.
Тирĕ — калпак тумалăх,
Çилпе пăр-пар тусмалăх.
Тушки — хăна пухмалăх,
Пĕрре йышпа лармалăх.

Карсак куян куртăмăр,
Тытмасăрах пуйрăмăр.
Эпир тытас карсакĕ —
Çырма-çатра касакĕ —
Вăрман айне чаш! шурĕ,
Кĕске хӳри вĕлт! турĕ.
...Карсак куян куртăмăр,
Кĕтмен çĕртен пуйрăмăр:
Тытмасăрах сӳрĕмĕр,
Çăвар тулли çирĕмĕр...







## ЧĔКЕÇПЕ ТĂМҪАЙ*

Чĕкеç чысланнă хăнара,
Çурхи çеçкеллĕ уявра.
Çырлаллă чей астивнĕ, тет,
Пылпа юсман тутаннă, тет.
— Юсманĕ уйăх пек хитре,
Ĕçес чейне тата тепре!..
Хальччен кун пек хăна пулман,
Хальччен кун пек хуçа курман,—
Чĕкеç ырланă хуçине,
Чунтан мухтанă ун сăйне.

Тăмкай чысланнă хăнара,
Çурхи чечеклĕ уявра.
Ҫăлин-кăлин çеç пăхнă, тет,
Хăйне мăнттайлăн тытнă, тет.
Тăмкай пачах ĕçмен чейне,
Хыпман пыл сĕрнĕ юсманне.
— Юсманĕ пур — пыра анмасть,
Пыл-чейĕ пур — ăша пымасть,—
Хурланă вăл хуçин сăйне,
Тиркенĕ ун пылне-чейне.

## СĔТЕЛ ТУЛЛИ СИПЕТĔМ
### (Çерçи юрри)

Ҫурак патне, ай, кайрăм —
Ҫурман яшка çитерчĕ.
Шуркут патне, ай, кайрăм —
Шерпет туса ĕçтерчĕ.
Чĕкеç патне, ай, кайрăм —

---
* Тăмкай (халăх каларăшĕ) — тăмана.

Читнай* ума кăларчĕ.
Тăри патне, ай, кайрăм —
Тултармăшне кастарчĕ.
Чакак патне, ай, кайрăм —
Чалпаш** пуçне тыттарчĕ.
Хăлат патне, ай, кайрăм —
Хутламипе сăйларĕ.
Шункар*** патне, ай, кайрăм —
Шăрттан лартса сумларĕ.
Эрне çапла çӳрерĕм,
Ҫил-çурт тĕлне пĕлмерĕм...
Ыран, юмарт туссемĕр,
Ҫерçи патне килсемĕр?!
Сире кĕтет шăрттанăм,
Шӳрпе, хуплу, çăрттанăм,
Ăсла пекех шерпетĕм —
Сĕтел тулли сипетĕм.



**ВАÇУК, ВАÇУК — МĂРАНККА...**

Ваçук, Ваçук — мăранкка,
Ĕçе тухсан — наянкка,
Ҫиле тесен — чупанкка,
Ҫиме ларсан — пыранкка,
Сентре çинче выртанкка,
Ялан каçан хыçанкка.

Ваçук, Ваçук — мăранкка,
Ан пул текех наянкка!

---

* Читнай — килте пĕçернĕ кулач.
** Чалпаш (авалхи сăмах) — парне панă така е сурăх.
*** Шункар (авалхи сăмах) — ăмăрткайăк, сунар кайăкĕ. *(Автор.)*

## УÇĂП ХĂЙМА ЮРАТАТЬ

Уçăп хăйма юратать,
Умĕ тăрăх юхтарать.
Ай-ай-ай, ай-ай-ай,
Умĕ тăрăх юхтарать.

Алли-ури Мĕкĕтен —
Чикнĕ тейĕн тикĕте.
Ай-ай-ай, ай-ай-ай,
Чикнĕ тейĕн тикĕте.

Тимуç вара тап-таса,
Ытараймăн эс пăхса.
Чăнахах, чăнахах,
Ытараймăн эс пăхса.

Пирĕн пĕчĕк Варвари
Пит тирпейлĕ, куртăр-и?
Чăнахах, чăнахах,
Пит тирпейлĕ, куртăр-и?



## ÇИМĔП, ÇИМĔП ТЕЕКЕН...

Ҫулюк кукăль пĕçерет,
Сантăр çисе пĕтерет.
Ҫулюк турăх кĕверет,
Сантăр ĕçсе пĕтерет.
Çимĕп, çимĕп теекен —
Çичĕ кукăль çиекен,
Çич кăвакал вăртакан,
Пичке шерпет ĕçекен.
Пурпĕрех, ав, тăранман:
— Парăр, — тет, — тата шăрттан!
Сантăр, Сантăр, Сантăркка —
Утаймасть те мăнтăркка.

* * *

Ман пиччеҫӗм — кӑмакаҫӑ,
Вӑл ялта — хастар ӑстаҫӑ.
Ун ӗҫне килрен куратӑп,
Ял мухтать те — савӑнатӑп.
Тӑпӑл-тӑпӑл та шап-шурӑ,
Ҫурт хӑтне кӳреҫҫӗ ырӑ.
Умӗсем — эреш чечеклӗ,
Аркисем хитре, пӗрмеклӗ.
Ҫӑкӑр та пиҫет пит хӳхӗм,
Пач тухмасть йӳҫенкӗ тӗтӗм.
Ӗҫ пӗлсен, пичче каларӗш,
Ҫын пулмасть вӑл арӑш-пирӗш.
Шутласассӑн урлӑ-пирлӗ —
Кӑмакаҫӑ та пит кирлӗ.
Кӳршӗ тимӗр, йӗс шаккатӑр,
Тепӗри ҫурт ӑсталатӑр.
Ҫӗр ҫыннин епле-ха унсӑр?
Ял илемӗ пулӗ сӑнсӑр.
Чӑн, пулсан этем ӳнерлӗ* —
Чунӗпе те вӑл типтерлӗ.

* Ӳнерлӗ — пултаруллӑ, ӑста, ӗҫчен.





* * *

Тете хӳпхӳ* ăсларĕ,
Ҫикак кĕвви каларĕ;
Пике хĕрсем юрларĕҫ,
Сатур яшсем ташларĕҫ.
Ҫукка сăрнай ăсларĕ,
Ҫуккук кĕвви каларĕ;
Ачи-пăчи юрларĕ,
Ачи-пăчи ташларĕ.
Анне тӳнкке ăсларĕ,
Тăрна кĕвви каларĕ;
Ҫилйыш ларса юрларĕ,
Ҫилйыш тăрса ташларĕ.
Атте тăмра ăсларĕ,
Тăри кĕвви каларĕ;
Тăван-пĕтен юрларĕ,
Тăван-пĕтен ташларĕ.



## ЭС ТЕ ПУЛĂН ПЫСĂККА...

Йăкăлт-йăкăлт пыл ачи,
Шурă шăллă шăкăлчи,
Ҫывăр канлĕн эс выртса,
Юрă парăп хайласа.
Тек сикмеҫҫĕ ачасем,
Тăрăс! тăрăс! путексем.
Тĕлĕреҫҫĕ пăрусем,
Сĕм вăрманти пăшисем.
Ҫывăр, пепкем, кăлтăркка,
Эс те пулăн пысăкка.
Шурă хур та ҫывăрать,
Тĕлĕкре ҫут кӳл курать.

* Хӳпхӳ — хăмăш кĕпҫинчен тунă вăрăм шăхлич.

Шухă çил те лăпланса,
Выртрĕ кăшăрт лăпчăнса.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçсен
Илтĕнмеççĕ юррисем.
Çаврăнмасть сăртри арман,
Шавлă мар хура вăрман.
Çывăр, пепкем, кăлтăркка,
Эс те пулăн пысăкка.

* * *

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлпи,
Пĕчĕк шăллăм, пыл пепи,
Сăсар кайăк сиккипе
Сикер-и те выляр-и?
Пăши пăруш чуппипе
Чупар-и те кулар-и?
Анне кайрĕ вăрмана,
Çырла татса килĕ-ха.
Атте кайрĕ хулана,
Ҫулач илсе килĕ-ха.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлпи,
Пĕчĕк шăллăм, пыл пепи,
Сăсар кайăк сиккипе
Сикер-и те выляр-и?
Пăши пăруш чуппипе
Чупар-и те кулар-и?
...Анне килчĕ вăрмантан,
Атте çитрĕ хуларан.
Çĕр çырли ларать умра,
Шур кулачă алăра.
Тек сикместпĕр сăсар пек,
Тек чупмастпăр пăши пек.
Шăллăмпа эпир шăпах,
Ҫаласам, атте, юмах.





## ЫВӐЛӐМА

Тӑрӑс! Тӑрӑс!
Тӑпӑрт! Тӑпӑрт!
Чун хевти-хунташӑм.
Эс чупатӑн,
Эс вылятӑн —
Пӗчӗкҫеҫ чӑвашӑм.
Ватӑ ҫын та —
Асаннӳ те —
Ав епле хаваслӑ.
Йӑлтӑр кулчӗ,
Алӑ сулчӗ —
Кӗҫ ташша яраслӑн.

* * *

Уйӑх питлӗ хӗрӗм пур,
Чакӑр куҫлӑ хӗрӗм пур,
Йӑлтӑр-йӑлтӑр куласшӑн,
Шурӑ шӑллӑ пуласшӑн.
Ҫырла питлӗ хӗрӗм пур,
Ҫӗмӗрт куҫлӑ хӗрӗм пур,
Лӑнкӑр-лӑнкӑр сикесшӗн,
Унтан паппа тӑвасшӑн.
Ҫил каять те, ҫил килет,
Хурӑн тӑрри хумханать.
Ҫывӑр, хӗрӗм, паппа ту,
Ир тӑрсассӑн — тяппа ту.

## АЛТӐР ÇӐЛТӐР — ÇИЧ ÇӐЛТӐР

Пĕчĕк Петĕр, пуçне каçăртса,
Халь вĕçес пек тăрать ăнтăлса.
Куç илмесĕр сăнать тÿпене —
Чĕлтĕр-чĕлтĕр çăлтăр тĕнчине.
— Ман пĕлесчĕ çав çăлтăр ятне,
Вĕçĕп эпĕ ÿссен ун патне...
Ав тата лешин ячĕ мĕнле?..
Ман ăна, асатте, пĕлмелле.
— Алтăр çăлтăр — çич çăлтăр пирте,
Çичĕ хут асăнаççĕ пурте.
Кайăк хур çулĕ, ав, тăсăлать,
Сив енчен кăнтăра вăл выртать.
Ав лешсем пĕр тăп-тăп ушкăнпа —
Ячĕ те Элкер ун çавăнпа.
Сумлă ячĕ теприн — Кĕвенте,
Маннă теççĕ сар хĕр Сехите.
Пăлан çăлтăрĕ теç теприне,
Ик алкаллă Çурçĕр пикине.
Кун çути йыхравлать сенкер куç —
Ячĕ унăн хитре — Шурăмпуç.
Ав епле, кашнинех ячĕ пур,
Эс çакна ĕмĕре картса хур, —
Тет ватти, мăнукне ăс парса,
Йĕс çăрха чĕлĕмне чĕм ярса.



# КИЛ ТĔРЕШĔН — ПУР ЭРЕШĔ

* * *

Атте тӳшек сарса тăрать,
Кĕреш каччи вырта пырать.
Кĕçех кĕçенĕ, ак, лаши,
Хĕмленĕ çут вучах ăшши.

*(Пӳрт туни.)*

* * *

Хура тупанлă упана,
Ятне кăкарнă упана,
Куллен вĕри çĕлен çулать,
Ялан хаяр çĕлен сăхать.

*(Хуран.)*

* * *

Пĕтĕр-пĕтĕр пĕтĕркке,
Шыв асамĕ — вĕтĕркке.
Хутлă шупăр тăхăнать,
Ывçăн-ывçăн сутăнать.
Ярăм-ярăм çĕленет,
Сар хĕр умне писенет.

*(Хурткуççи.)*

* * *

Учĕ вĕççĕр малалла,
Ик çуначĕ каялла.
Авăсать те кавăсать,
Атăлпа вăл тупăшать.

*(Кимĕ.)*



* * *

Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи,
Йĕтĕр пуçĕ — шерепи.
Пиçрĕ-куçрĕ тинкĕли
Ӑуç тулли ача валли.

*(Сĕлĕ тинкĕли.)*

## ӐАШНИ ÇЕÇКИ ПЕХЕТЛĔ

* * *

Минлĕ, кимлĕ — симĕс симлĕ,
Татрăм çакрăм — пулчĕ хĕмлĕ.
Хыпрăм пăхрăм — ай, çунтарчĕ,
Пач тухман тара кăларчĕ.

*(Пăрăç.)*

* * *

Ай, тутли эп, пит тутли,
Тимĕр сунтăхĕ ятли.
Пыллăхра хĕрсе пиçеп,
Сăрт çине тухса сикеп.
Йăлт тулсан — кĕтеп сире;
Ан татах унччен сĕре.

*(Çĕр çырли.)*

* * *

Уй-хир шап-шур чечеклĕ,
Ӑашни çеçки пехетлĕ.
Чĕрес тулли кĕç пулĕ
Хăп-хăмăр тутлă пылĕ.
Пăтти унтан, ак, пиçĕ,
Çупа ун куçĕ çиçĕ.

*(Хуратул.)*





* * *

Хĕрлĕ тутăрпа,
Çиçкĕнен сăнпа,
Ҫур, ларать хитре,
Тĕс кӳрет хире.
Ҫĕр енне кайсан,
Хĕмĕ тăкăнсан,
Ун кукши чипер —
Кил, уçса çиер.

*(Мăкăнь.)*

## СĂНА ТА ҪУР — ҪАШНИН ХĂЙ САНĔ ПУР

* * *

Ҫатăк кутлă ун йĕленĕ.
Те ятне çапла çĕленĕ?
Ҫур, мерченлĕ ун калпакĕ,
Çӳл кунчаллă сар пушмакĕ.
Ташă кĕç ак вăл çаптарĕ,
Шур ялне туя пухтарĕ.

*(Тăрна.)*

* * *

Çулçă çийĕн măштăр-măштăр
Хăмăр чун тасçта васкать.
Ман тĕле чупса çитет те —
Чăмăр чун пулса выртать.
Алăпа кĕлт сĕртĕнетĕп —
Йĕп вĕçпе тĕлт! тирĕнетĕп.

*(Чĕрĕп.)*



* * *

Ҫăлтăр-ку-у! та ҫăлтăр-ку-у!
Шур сăхманлă, кам-ши ку?
Тĕк-ҫӳҫне пĕр майласа,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн якатса,
Шав утать карнис ҫинче
Е вăл — пĕлĕт айĕнче.
Ҫăлтăр-ку-у! та ҫăлтăр-ку-у!
Пит тирпейлĕ, кам-ши ку?

*(Кăвакарчăн.)*

* * *

Кăвак тĕнчемĕр сурăхне
Кĕтӳҫ ялан ҫаҫпа кĕтет.
Ырать пулас вăл ир енне,
Кайри уя аран ҫитет.

*(Уйăх.)*

* * *

Ял хуҫи, пасар куштанĕ,
Ҫĕр иртсен ҫич хут халланĕ,
Пи хĕрне хуран ҫактарĕ,
Кил пуҫне суха тыттарĕ.

*(Автан.)*



* * *

Хăртти-хартти,
Пӳрт-ҫурт ăсти.
Тăвать ырҫа,
Чыхать пăрҫа.

*(Арлан.)*



* * *

Хуньтăк хĕрĕ, сарă хĕрĕ,
Ҫунĕпех тăвать вăл тĕрĕ.
Шур ҫӳпҫи кĕҫех, ак, тулчĕ,
Уҫăп килчĕ, уҫрĕ, илчĕ.

*(Пыл хурчĕ.)*

* * *

Хӳри ун — йĕрĕлче,
Чĕрни чар! чĕрĕлче.
Апат ҫисен — улпут,
Выҫсан — ыйтать ҫич хут.
Сивве аван чăтать,
Ăшша ямасть, тытать.
Ҫурта-йĕре упрать,
Кĕтӳ кĕтет, сыхлать.

*(Йытă.)*

* * *

Хăлхи хупах — куян та мар,
Сасси ҫихре — автан та мар.
Хӳри вылять, чĕрни чавать —
Ялан ҫăкпа*, яланваскать.

*(Ашак.)*

---

* Ҫăк — тиев, кутамкка.



## ТУПМАЛЛИ

Тăван çĕршыв . . . . . . . . . . . 3
«Сăрт тăрринчи çилармань...» . . . . . 4
Уйăх . . . . . . . . . . . . . . . —
«Вăшик! вăшик! çил вĕрет...» . . . . . . 5
Çуран тăман . . . . . . . . . . . . —
Ирхине . . . . . . . . . . . . . 6
«Кăрлач сиввийĕ тамалсан...» . . . . . —
Шевле вăййи . . . . . . . . . . . . 7
Çумăр . . . . . . . . . . . . . . —
Хăмла . . . . . . . . . . . . . . 8
Юман . . . . . . . . . . . . . . —
Ак тытатăп та вĕçетĕп... . . . . . . . . 9
«Вăштăр-вăштăр уçă çил...» . . . . . . 10
Пĕрхĕт кайăк . . . . . . . . . . . —
«Кĕр тĕррилле шуçăм...» . . . . . . . . 11
Кĕркунне . . . . . . . . . . . . . 12
Тăрнасем . . . . . . . . . . . . . 13
Хурчăка . . . . . . . . . . . . . 14
Шуркут . . . . . . . . . . . . . . —
Тăмана . . . . . . . . . . . . . . 15
Чепчен . . . . . . . . . . . . . . —
Ал çуптарĕ вата вăрмана... . . . . . . . 16
Путене . . . . . . . . . . . . . . —
Шурă акăш . . . . . . . . . . . . 17
Сăвăр... . . . . . . . . . . . . . . 18
Чĕрĕп . . . . . . . . . . . . . . —
Ёлккен тукмак, эс — йĕс тукмак... . . . . 19
Çăрттан . . . . . . . . . . . . . 20
Шапа . . . . . . . . . . . . . . —
«Чăш! — тет, — кăш! — тет...» . . . . . . 21
Хуçам мана уть терĕ... . . . . . . . . . 22
Пирĕн качака . . . . . . . . . . . —
«Çавра хушкаллă паниçкем...» . . . . . 23
Турă утăм — чун çути... . . . . . . . . —

Ӑрик-кӑрик кӑркка тус... . . . . . . . . 24
Тӗрлӗ тӗслӗ чӗпӗсем . . . . . . . . —
Эп ун чухне ачаччӗ... . . . . . . . . . 25
«Тух, тух, Хӗвел!..» . . . . . . . . . 26
Эсир курман кун пек камит... . . . . . . —
Ай, хитре Телле «лаши»... . . . . . . . 27
Пилӗк пӗртӑван . . . . . . . . . . 28
Тимӗрҫӗ . . . . . . . . . . . . . 29
Ӑун пек уяв ӑҫта пур-ши? . . . . . . 30
Ӑам кама ултаӗ-ши?.. . . . . . . . . 31
Тух, чуп, сар ача . . . . . . . . . 32
Ӑарсак куян куртӑмӑр... . . . . . . . . 33
Чӗкеҫпе тӑмкай . . . . . . . . . . 34
Сӗтел тулли сипетӗм . . . . . . . . —
Ваҫук, Ваҫук — мӑранкка... . . . . . . . 35
Усӑп хӑйма юрататъ . . . . . . . . . 36
Ҫимӗп, ҫимӗп теекен... . . . . . . . . . —
«Ман пиччеҫӗм — кӑмакаҫӑ...» . . . . . 37
«Тете хӳпхӳ ӑсларӗ...» . . . . . . . . 38
Эс те пулӑн пысӑкка... . . . . . . . . . —
«Чӗвӗл-чӗвӗл чӗвӗлпи...» . . . . . . . . 39
Ывӑлӑма . . . . . . . . . . . . . 40
«Уйӑх питлӗ хӗрӗм пур...» . . . . . . . —
Алтӑр ҫӑлтӑр — ҫич ҫӑлтӑр . . . . . . 41
Кил тӗрешӗн — пур эрешӗ . . . . . . 42
Ӑашни ҫеҫки пехетлӗ . . . . . . . . . 43
Сӑна та кур — кашнин хӑй сӑнӗ пур . . 44

25 пус

*Для детей дошкольного возраста*

**Валем АХУН**
(Максимов Валентин Осипович)

**ИГРА ЗАРНИЦЫ**

Стихи

На чувашском языке

Редактор **А. А. Васильева**
Художник **З. И. Чернова**
Художественный редактор **М. Д. Давлятшин**
Технический редактор **В. П. Окина**
Корректор **Л. К. Егорова**

ИБ 2252

Сдано в набор 12.12.88. Подписано к печати 18.09.89. Формат 70×108/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 4,20. Усл. кр.-отт. 17,48. Учетно-изд. л. 3,67. Тираж 10000 экз. Заказ № 4191. Изд. № 81. Цена 25 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.